Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май

Çĕнтерӳ çăмăллăн килмен

Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалласа районта мероприятисем иртте-ресси малалла пырать. Апрелĕн 27-мĕшĕнче вара район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи ветерансен тата старейшинăсен канашĕсен анлă ларăвĕ иртрĕ. Унта старейшинăсен, ветерансен канашĕсен членĕсем, Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, вилнĕ çар çыннисен тăлăх арăмĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем хутшăнчĕç.

Мероприяти пуçланиччен ветерансем декоративлă прикладной искусствăн маçтăрĕсен тата ачасен пултарулăхĕн Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халаллана ĕçĕсемпе паллашрĕç.

Ӳяв умĕнхи ларăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ. «Çак Çĕнтерӳ çăмăллăн килмен. Вăрçа тухса кайнă 9845 салтакран 5491 салтак вăрçă хирĕнчех выртса юлнă»,– терĕ Юрий Александрович.

Вăрçăра вилнисене пĕр минут хушши шăп тăрса асăнчĕç. Муркаш лицейĕн кадечĕсем Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕн пуçлăхĕ В.Е. Андреев ертсе пынипе вăрçăра вилнисене халалласа лартнă палăк умне чĕрĕ чечексем хучĕç.

Юрий Александрович пухăннисене пурне те çирĕп сывлăх, вăрăм тата телейлĕ кун-çул сунчĕ. Вăл çавна та палăртрĕ. Раççей Федерацийĕн, Чăваш Республикин Правительствисем ветерансем пирки тимлемеллине манăça кăлармаççĕ. Районĕпе 51 вăрçă ветеранĕ пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă. Вăл шутран 9 çын пурăнмалли çурт-йĕр илме свидетельствăсене тивĕçнĕ ĕнтĕ. Çак кунсенче вăрçăн татах 8 ветеранĕн пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсен ыйтăвне татса парĕç.

Шел пулин те, ветерансен йышĕ чаксах пырать. Хальхи вăхăтра районта вăрçăн 107 ветеранĕ пурăнать. Вăл шутран 9-шĕ – ветерансемпе танлаштарнисем, вăрçăра вилнисен тăлăх арăмĕсем – 18, тыл ĕçченĕсем – 1910. Юрий Александрович çавна палăртрĕ: хальхи ăру ветерансен ырă традицийĕсене малалла тăсать. «2010 çул районăн пур сферинче те çĕнтерӳллĕ çул пултăр»,– терĕ район пуçлăхĕ.

Юрий Александрович вăрçă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсене хăйĕн ячĕпе Тав çырăвĕсем парса чысларĕ.

Ларăва пухăннисене ветерансен районти канашĕн председателĕ М.В. Виноградова саламларĕ: «Пирĕн ветерансем патшалăх хăйсемшĕн тăрăшнине туйса тăраççĕ. Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 70 çул çитнине те пирĕн пĕрле çак йышпах кĕтсе илмелле пултăр»,– палăртрĕ вăл.

Вăрçă ветеранĕсен те аса илмелли самантсем сахал пулмарĕç. «Герой» хуçалăх территорийĕнчен фронта 249 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 150-шĕ кăна каялла таврăнма пултарнă. Манăн 76 çулхи атте вăрçă çулĕсенче конюх пулса ĕçленĕ. Вăрçăран таврăнсан эпĕ ун патне лаша витине кайрăм. Лашасем вырăнне унта вăкăрсем тăраççĕ. Атте хăй аллипе 75 лашана вăрçа ăсатнине куççуль витĕр каласа пачĕ»,– аса илет вăрçă ветеранĕ, Шурча ялĕнче пурăнакан Ф.В. Савельев.

Хăйсен вăрçă çулĕсене икĕ Мухтав орденĕн кавалерĕ, Юнкă ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакан И.А. Васюхин, Чуманкасси ял тăрăхĕнчи И.Д. Вязов ветерансем те аса илчĕç.

Вăрçă ветеранĕсене, вăрçăра вилнисен тăлăх арăмĕсене, тыл ĕçченĕсене Раççей Геройĕ Е.Г. Борисов та саламларĕ. «Пире, çамрăк ăрури çар çыннисене, хĕрӳ точкăсенче паттăрлăх кăтартма сирĕн вăрçă вăхăтĕнчи тĕслĕх хистенĕ. Тавта пуç сире эсир пурришĕн. Тавта пуç 65-мĕш Çĕнтерӳ çуркуннишĕн»,– терĕ Евгений Германович.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ячĕпе пухăннă ветерансене Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева тав сăмахĕ каларĕ. Вăл палăртнă тăрăх вăрçăран таврăнайман ентешĕсен ячĕпе ял тăрăхĕн территорийĕнче йывăçсем лартса хăварнă. Куртан пĕтĕмпе 577 çын фронта тухса кайнă, 306 çын каялла таврăнайман. Кăçал Якаткасси ялĕнчен вăрçа тухса кайнă тата каялла таврăнайман çынсен ячĕпе майăн 8-мĕшĕнче обелиск уçма палăртнă. Кунтах 37 çăка лартса уçнă аллея та ешерет. Шăпах çавăн чухлĕ çын Якаткасси ялĕнче вăрçăран таврăнайман. Çак ырă ĕçе пуçараканĕ, обелиск уçма хистекенĕ вара штурман пулнă саппасри майор В.К. Гордеев.

Ӳяв кунĕ умĕн çамрăксем ячĕпе çĕнтерӳçĕ геройсене Муркаш шкулĕнче вĕренекенсем саламларĕç. Ӳяв вара «Халăх паттăрлăхĕ – çемье паттăрлăхĕнче» музыкăпа хореографи композицийĕпе вĕçленчĕ.

В. ШАПОШНИКОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: ветерансем уява чылайăн пухăнчĕç.

Вĕрентӳ учрежденийĕсенче

Лицеист пулма ансат мар

Муркаш лицейĕ вăл вĕренекенсем анлă та тарăн пĕлӳ илмелли вырăн кăна мар, кунта вĕсем хăйсен пĕтĕм пултарулăхне аталантарма пултараççĕ. Çакă вĕсене пурнăçра питĕ кирлĕ.

Эпир, çак лицейран вĕренсе тухнисем, çак майсем пирки ыттисенчен лайăхрах пĕлетпĕр. Муркаш район администрацийĕ районти вĕрентӳ шайĕн пахалăхне ӳстерессипе лицейăн пур пуçарăвне те пулăшса пынине ырламалла кăна.

Хамăр ятран эпир лицей коллективне хамăр пурнăçра тунă çитĕнӳсемшĕн, пурнăç çулне тĕрĕс суйласа илме пулăшнăшăн тав сăмахĕ каласшăн. Çавăнпа та пирĕн шăллăмсемпе йăмăксем те эпир пуçланă ĕçе малалла тăсас шухăшлă: вĕсем лицея вĕренме кĕрсе ăсталăха туптасшăн.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче лицейра пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче 9-мĕш классенче вĕренекенсем хушшинче лицейра вĕренес текенсемпе олимпиада иртрĕ.

Çавна палăртма кăмăллă: лицей мухтавĕ çулран çул ӳссех пырать. Ун пирки пирĕн районта вĕренекенсем кăна мар, пĕтĕм республикипех пĕлеççĕ. Хальхи вăхăтра лицея вĕренме килес шухăшлисем Муркаш районĕнчи тĕрлĕ шкулсенче вĕренекенсем кăна мар, Элĕк, Çĕрпӳ, Красноармейски районĕсен шкулĕсенчен те пур. Шел пулин те, лицей вĕренме пурне те йышăнма пултараймасть. Паянхи куна вĕренме кĕрес текен 2 ача пуçне 1 вырăн тивет. Кам лицеист пулма тивĕçнине олимпиада итогĕ кăтартса парĕ. Пурне те вĕсене ăнăçусем тата пултарулăх сунатпăр.

И. ИГНАТЬЕВА, С. СИЛЬВЕСТРОВА, Н. КОНСТАНТИНОВА,
Муркаш лицейĕнчен вĕренсе тухнисем.

Тав сăмахĕ

Сывалма пулăшакансене – тав

Халĕ эпĕ Муркаш район больницинче сывалатăп. Çавăнпа та манăн сывлăхшăн тăрăшакансене пысăк тав сăмахĕ каласлас килет. Кусем вĕсем тĕп врач В.Г. Данилов, хирурги уйрăмĕн пуçлăхĕ Г.М. Огурцов, врачсенчен С.М. Васильев, Ю.А. Кузнецов, Л.Н. Андреев, А.П. Афанасьев, Н.А. Кожевников, И.В. Воробьев, И.А. Софронова аслă медицина сестри, медсестрасенчен В. Санина, Г. Толстова, О. Захарова, Е. Лепешкина, В. Сорокина, Е. Донскова, А. Романова, Е. Майорова, сурансене çыхнă çĕрте ĕçлекен медицина сестрисем И. Коломенскова, М. Венскене, операци медицина сестрисем С. Алексеева, Г. Викторова, В. Алексеева, Т. Николаева, А. Бычкова, Р. Михайловапа З. Лаптева буфетчицăсем, постри санитаркăсенчен Н. Кириллова, Е. Вязова, Л. Степанова, С. Дмитриева, В. Александровасем, Н. Петрова, Н. Мироваева, сурансене çыхнă çĕрте ĕçлекен санитаркăсем Н. Петрова, Г. Кириллова, операци уйрăмĕн санитаркисем А. Юзукова, З. Волкова.

Кунпа пĕрлех пĕтĕм больница коллективне тав сăмахĕ каланă пулăттăм. Эсир мĕн шутланисем яланах çитсе пыччăр.

Умра пирĕн – Çуркуннепе ĕç уявĕ, Аслă Отчественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине уявласси. Кунпа пĕрлех майăн 12-мĕшĕнче – Медицина сестрисен пĕтĕм тĕнчери кунĕ. Пурсăра та сире çав ятпа чĕререн саламлатăп. Çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатăп.

Хирурги уйрăмĕнче сипленекенсен ячĕпе

Я. КРЫСИН,
ĕç ветеранĕ.

Паян – Пушар хуралĕн кунĕ

«Инкексен калăпăшне пĕчĕклетме пĕрле ĕçлемелле»

Çапла пĕтĕмлетрĕ РФ Пушар хурал ĕçченĕсен профессиллĕ уявĕ умĕн ирттернĕ калаçăвне районти патшалăх пушар надзорĕн пуçлăхĕ Илья Николаевич СМИРНОВ. Район аталанăвĕнче, Чăваш Енĕн эффективлă хутшăнăвĕсенче пушар хăрушсăрлăхĕ те иккĕмĕш вырăнта тăмасть. Раççейре куллен 600-700 пушар алхаснине, ирĕке кайнă çулăмра 70-80 çын пурнăçĕ татăлнине шута илсен, пушар хуралĕнче тăракансен ĕçĕн ответлăхĕ куç умне туллин тухать.

– Пушар хуралĕнче ĕçлекенсен уявĕ умĕн калаçăва салам сăмахĕнчен пуçлар. Сире, обществăшăн çакнашкал яваплă ĕçре вăй хуракансене, профессиллĕ уявăр ячĕпе саламлатăп.

– Тавта пуç. Пушар хăрушлăхĕ паянхи пулăм мар. Çавăнпа та ун çине çиелтен пăхакансемпе килĕшес килмест. Кук ыйту тавра вара сӳтсе явмалли нумай. Май килнипе усă курса эпĕ те районти пушар хуралĕнче паян ĕçлекенсене тата çак службăн ветеранĕсене, штатра тăман хамăрăн ĕçтешсене РФ Пушар хуралĕн кунĕпе саламласа туса ирттернĕ ĕçĕсемшĕн, куллен-хи тăрăшулăхпа çитĕнӳсемшĕн тав тăватăп. Хăвăр суйласа илнĕ ĕçре ятăра ямасса шанса тăратăп. Сире те, сирĕн çемье членĕсене те кулленхи ĕçре-пурнăçра сывлăхпа телей кăна сунатăп.

– Ăçтан пуçланать-ха Раççей Пушар хуралĕн кунĕ?

– Историпе пăхсан, Раççейри пушар хурал кун-çулĕ инçете каять. 1649 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕ. Патшан «Наказ о градском благочинии» Указĕ кун çути курать. Çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ Раççейри профессиллĕ пушар хурал пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ.

– Унтанпа улшăнусем сахал мар пулчĕç ĕнтĕ...

– Тĕрĕсех, анчах вĕсем кашниех пушар хуралне малалла уттарнă-аталантарнă, халăх пурнăçĕпе экономика сыхлавне вăйлатнă. 1994 çулта «Пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен» Федераллă Саккун вăя кĕчĕ. Унта палăртнă тăрăх пушар хуралĕн тĕп задачисем – пушар тухассинчен сыхланассине йĕркелесси тата «хĕрлĕ автана» вăхăтра сӳнтересси. Унччен Шалти ĕçсен министерствинче пулнă пушар хуралĕ 2000 çултанпа РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерствине пăхăнса тăрать. 2003 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнче РФ Президенчĕ пушар хăрушсăрлăх облаçĕнчи патшалăх управленине çĕнетсе лайăхлатассине улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен указ кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн пушар хуралĕ халĕ пĕр-пĕрне пăхăнман икĕ подразделени çине пайланать: федераллă шайри патшалăх пушар надзорĕ тата вырăнти пушар сӳнтересси-пе çăлав ĕçĕсем туса ирттерекен служба. Май килнипе кĕскен патшалăх пушар надзорĕн тивĕçĕсем çинче чарăнса тăрам. РФ Правительстви 2004 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕнче «Патшалăх пушар надзорĕ çинчен» Постановлени кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн патшалăх пушар надзорĕ ĕç тăвакан федераллă органсем, РФ субъекчĕн ĕç тăвакан органĕсем, вырăнсенчи самоуправлени органĕсем, организацисемпе должноçри çынсем, уйрăм граждансем пушар хăрушсăрлăх требованийĕсене пăхăнассине йĕркелет тата тĕрĕслет.

– Ветерансем терĕр те, районти пушар хуралĕнче нумай çул службăра тăнисене уяв умĕн ятран палăртса хăвармăр-ши?

– Патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕ те, 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕ те ветерансене саманлăха та манмаççĕ. Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн 1964 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче çырăнма пуçланă историйĕ пысăк та пуян. Унăн пĕрремĕш пуçлăхĕ И.М. Казамбаев, малтанхи водительсем Ю.И. Тучевпа Н.Т. Тарасов тунă ĕçсем паян та упранаççĕ. Вĕсен ĕçне малалла тăснă вун-вун ĕçтеш ятне эпир манмастпăр: А.П.Богданов, И.Б. Иванов, И.А. Степанов, Н.П. Романов, Г.М. Пыркин, А.А. Архипов, В.Е. Павлов, Н.К. Чернов, М.М. Верендеев, В.В. Воробьев, Г.М. Леймов, пушар хуралĕнче чылай ĕçленĕ В.А. Сорокин т. ыт. те. Вĕсен ĕçне паян çамрăксем малалла тăсаççĕ.

– «Раççей Федерацийĕнче вырăнти самоуправление йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен» Федераллă Саккун вăя кĕни пушар хăрушсăрлăхĕпе епле çыхăннă?

– Çапла, пушар хăрушсăрлăхне кун йĕркинче тытас ыйту ял тăрăхĕсен чиккинче вырăнти самоуправлени органĕсен нормативлă акчĕсемпе пулса пырать. Кунта пушар хуралне тата унăн ĕçне йĕркелесси, халăха çак ĕçе явăçтарасси тата пушар хăрушсăрлăхĕпе пĕлтерсе тăрасси, пушарсене сӳнтересси, аварипе çăлав ĕçĕсене вăхăтра туса ирттересси кĕреççĕ. Пушар хăрушсăрлăхĕ – хамăр алăра. Апла пулсан лăпкă пурнăçшăн пурсăмăр та пĕрле яваплă пулса тăратпăр. Хальлĕхе вара... Кăçал апрелĕн 27-мĕшĕ тĕлне районта 10 пушар пулчĕ. Вĕсенче пĕр çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Танлаштарма, пĕлтĕр çак вăхăтра районта 14 пушар пулнăччĕ, вут-çулăмра пĕр çын пурнăçран уйрăлнăччĕ.

А. БЕЛОВ калаçнă.